Таван Ен
№ 34 (11193-11194)
Çурла, 31, 2023



Проект ЧР Цифра министерстви пулăшнипе пурнăçланать

# Чăн геройăн 5 правили

# Тусанра шăллĕне шыранă



**«Афганистанран çу уйăхĕн 4-мĕшĕнче тухнă та 1985-мĕш çулхи çу уйăхĕн 9-мĕшĕнче килте пулнă. Аслă сержантсем пулса таврăннă», – терĕ Александр Горшков. «Дядя Вася» çарĕсенче йĕкĕреш шăллĕпе пĕрле пулнă вĕсем. Ишлей салинче çуралнă Александрпа Андрей Горшковсем 1985-1987 çулсенче хĕсметре тăнă – Узбекистанри Фергана хулинче учебкăра 5 уйăх пулнă хыççăн çамрăксем Афганистана лекнĕ.**




Горшковсен çемье архивĕнчи сăн ÿкерчĕксем

Хĕсметри çулсем

«Маларах та çитме пултарнă. Пире Хĕрлĕ Çăлтăр орденне памалла пулнă. Эпир кĕтсе тăмарăмăр. Киле вара пĕр орден – Андрейăн анчах килчĕ. Эпĕ те Горшков А.В, вăл та, çавăнпа тесе шухăшларăмăр. Военкомата кайса запрос ятăмăр, хурав килмерĕ», – каласа кăтартрĕ Александр.

Йĕкĕреш шăллĕпе пĕрле вĕсем сывлăшпа десант çарĕсене лекме тĕллев лартнă, çавăнпа та ДОСААФра темиçе хутчен парашютпа та сикнĕ. Ку çамрăк сывлăшпа десант çарĕсене лекессе пĕлтернĕ. Виçĕ хут сикнĕ, хĕлле… «Мĕншĕн ВДВна суйланă? Ку элитлă çарсем шутланаççĕ. Пирĕн йăхра десантниксем нумай. Манăн аннен хĕр чухнехи хушамачĕ Фомирякова пулнă. Вĕсен десантниксем чылай. Пĕрремĕш десантник Гера Фомиряков, манăн виççĕмĕш сыпăкри пичче. Манăн йăмăкăн мăшăрĕ те десантник, Мурманскра службăра тăнă», – пĕлтерчĕ Александр Валерианович.

### ЯЛАН ШĂЛЛĔПЕ ПĔРЛЕ

Учебка хыççăн Афганистана, Кабул хулине янă. Унта, пирĕн герой аса илнĕ тăрăх, чăн та «9-мĕш рота» фильмри пек пулнă. Афганистана вĕсем ИЛ-76 груз самолетпа вĕççе килнĕ, Бала-Хиссар крепоçĕнче 357-мĕш полкра службăра тăнă. «Симĕссисен» (Афган çарĕсене çавăн пек каланă) унта авиаци полкĕ пулнă. «Çав полка пире панă пулнă. Вăл лайăххисен шутне кĕнĕ. Фильмсем кăтартма илсе килетчĕç, чи малтан вĕсене пирĕн полкра пăхнă. Пирĕн пата Кобзон пĕрре мар килнĕ, «Песняры» ушкăн та юрласа кăтартнă. Лещинский корреспондент яланах килетчĕ», – аса илчĕ Александр Горшков. Полкра тĕл-тĕл анчах пулнă, ялан тĕрлĕ операцисене хутшăннă.



Афганистанра вĕсем, Александрпа Андрей, ялан пĕрле çӳренĕ. Малтан пулеметчиксем, унтан иккĕшĕ те взвод командирĕн çумĕ пулса тăнă. «Çар операцине кайма уйрăлнă: мана блокировкăна яраççĕ, Андрея – территорине шырама. Ун чух «Çĕр – сывлăш» реактивлă снарядсем килме пуçларĕç. Вара пире тĕрлĕ районсене, тусене тĕрĕслеме ятратчĕç», – пĕлтерчĕ Александр Валерианович. Снарядсене шыранă, тупнă. Тĕрлĕ операцисене хутшăннă, Кандагарта та пулнă. Кабултан Кандагара самолетпа вĕçнĕ. Техникăна вара виçĕ кун кĕтнĕ, мĕншĕн тесессĕн вĕсем хăйсем тĕллĕн килнĕ.

### ДУХА ТЫТНĂ

Хĕрлĕ Çăлтăр орденне Панджшер провинцийĕнче ирттернĕ операцишĕн тивĕçнĕ. Кунти çарсене Ахмад Шах Масуд ертсе пынă иккен (ăна Панджшер арăсланĕ тенĕ). Çар операцийĕн вăхăтĕнче духа тыткăна илнĕ, çумĕнче вара секретлă хутсем пулнă. Çар операцийĕ мĕнле иртет? Унта пур çар та хутшăнать: артиллеристсем, десантпа çар сывлăшĕсем, пурте. Задани илетĕн те колоннăпа каятăн. Колоннăра БТРсем те, град системисем те. Лапама çитсен десантниксене тусене яраççĕ. Разведчиксем маларах каяççĕ, даннăйсене десантниксене параççĕ. Артиллерипе авиаци пулăшать: духсен координачĕсемпе ĕçлет. Авиацие, МИГ бомбардировщиксене, «грачсем» тесе чĕннĕ-мĕн. «Çула каçхине тухнă – тул çутăла пуçланă тĕле точкăра çирĕпленмелле пулнă. Ун чух духсем çине лекрĕмĕр те пĕрне тыткăна илтĕмĕр», – каласа кăтартрĕ Александр. Ун чух вăл взводнăй вырăнне пулнă, блокировкăра тăнă. Андрей шăллĕ ту хушăкĕпе духсене хăваланă.

### ТЕМĔН ТЕ КУРНĂ

«Паттăрлăхшăн» медале фугас çинче БТРпа сирпĕннĕ хыççăн панă. Ун чух контузи те пулнă. «1986 çулта духсем çулсене минăсем хунине пĕлтерчĕç, çавăн чух БТРпа сирпĕнтĕмĕр, башня пĕр енне вĕççе кайрĕ, чылай пурнăç татăлчĕ. Механике туртса кăлартăм, анчах вăл та вилчĕ», – пĕлтерчĕ Александр Валерианович. Тата акă мĕн палăртрĕ вăл: вĕсем çĕртме уйăхĕн 22-мĕшĕнче сирпĕннĕ, унсăр пуçне çав кун сирпĕннĕ 22 тĕслĕхе шутласа кăларнă. «Пирĕн умра саперсем пынă. Пĕри – дембель, темиçе кунран киле каймаллаччĕ, анчах та киле чĕрĕ çитеймерĕ…» – йывăррăн аса илчĕ пирĕнпе калаçакан. Темĕн те курма тивнĕ çав пирĕн çамрăксен. Ун чух йĕкĕрешсем 19 çулта пулнă.

Çулсене мина хуни çарсене апат-çимĕçпе тивĕçтерес ĕçе чарма пултарнă. Унсăр пуçне духсем колоннăсене автоматран пеме пуçланă. Колоннăсене сыхлама, продовольствине вырăна çитĕрме хутшăнтарнă. Александр Горшков аса илнĕ тăрăх, блокировкăсене час-часах тухма тивнĕ. «Совет Союзĕнчен тухсассăн колоннăна пĕрисем сыхлаççĕ, кунта эпир кĕтсе илетпĕр», – терĕ вăл.

### САЛТАК ÇУЛĔСЕНЧЕН МĔН ИЛНĔ?

1. Ĕçрисене вĕсемпе тусене хăпармастпăр тесе калатăп. Мĕншĕн тесен кашни харпăр хăйĕншĕн. Салтакра вара юлашки çăкăр татăкне пайлатăн.
2. Çар тăванлăхĕ, пĕр-пĕрне пулăшма, тĕрев пама вĕрентет. Унсăр пуçне шăллĕпе пулнă, уншăн пăшăрханнă. Фугас çинче сирпĕннĕ чух иккĕн пулнă, контузи илнĕ. Сирпĕннĕ хыççăн куçа уçма çук тусан тăнă, чи малтан шăллĕне шыранă.
3. Салтак яваплăха вĕрентет. Унта арçын ачасем кайнă, каялла арçынсем таврăннă.
4. Тӳрĕ кăмăллă пулмалла.
5. Аслисене итлемелле. Çара çитсенех опыт та çук, çавăнпа та аслă юлташсен канашĕсене ăса хумалла.

■ **Анна КАШАЕВА**



А. Горшков мăнукĕпе

● ХĂРУШСĂРЛĂХ

# Хуралçă çула пӳлчĕ

## Округри вĕрентӳ учрежденийĕсене мĕншĕн ирĕклĕн кĕрсе тухма пулмасть?

**Çĕнĕ вĕренӳ çулĕ çитрĕ те: ачасем кĕçех парта хушшине урока ларĕç. Унччен маларах кашни вĕрентӳ учрежденийĕ тĕплĕ тĕрĕслев витĕр тухрĕ. Уйрăмах тимлĕ пулмалли объектсенче кĕтмен хăнасене хапăл-и – çакна тĕрĕслеме «Тăван Ен» журналисчĕсем пĕлӳ çурчĕсене çаврăнса тухрĕç.**

Пирĕн çĕршывра авăн уйăхĕн 3-мĕшĕ – терроризмпа кĕрешме пĕр тĕллевпе пĕрлешмелли кун. 2004 çулхи авăн уйăхĕн пĕрремĕшĕнче террористсем Беслан хулинчи 1-мĕш шкулта: виçĕ куна яхăн 1000 ытла çынна ĕçме-çиме памасăр шкулта тытнă. Авăн уйăхĕн 3-мĕшĕнче шкула штурмпа ирĕке кăларнă. Çав террактра 300 ытла çын пурнăçĕ талнă, вĕсенчен 200-ре яхăн – ачасем. Çакăн пек чунсăрла тата хăрушă ĕççем пирĕн пурнăçра урăх ан килсе тухчĕр тесе шкулсенче терроризма хирĕç кĕрешмелли мерăсене юлашки çулсенче уйрăмах вăйлатаççĕ.

Кӳкеç лицейĕ муниципалитетра чи пысăк вĕрентӳ учрежденийĕ шутланать. Алăкран кĕрсенех хуралçă посчĕ, унтан металлорамка, турникет. Видеокамерăсем шкул территорийĕнчен тата зданийĕнчен хуралçă компьютерĕ çине сăнсене тӳрех кăлараççĕ. Хуралçă эпир кам пулнине тата мĕн тĕллевпе çӳренине тĕпченĕ хушăра лицей директорĕ пырса тухрĕ. «Хăрушсăрлăх паспорчĕпе килĕшӳллĕн сыхăлăх тĕллевĕпе пур мерăна та йышăннă: автоматла хапха, шлагбаум, металлорамкăсем, территорие кĕнĕ çĕрте тата зданире тĕрĕслевпе контроль пункчĕ. Хурал организацийĕпе килĕшӳ тунă», – пĕлтерчĕ пире Анжела Ивановна.

Кӳкеçри 1-мĕш шкул лицейра кнопка урлă уçăлакан ятарлă хапха та пур. Видеокамерăсем шкул территорийĕнче те, зданинче те. Тĕттĕм вăхăтра шкул территорийĕнче çутă. «Малашне шкул зданине ирхине питĕрĕпĕр те уроксем хыççăн кăна уçăпăр. Шкул хапхи çине домофон вырнаçтарас шухăшлă – территорие ют çын ан кĕтĕр», – каласа кăтартрĕ Кӳкеçри 1-мĕш шкул директорĕ Людмила Петрова. Палăртса хăвармалла, икĕ вĕрентӳ учрежденийĕнче те пире килекенсен журналĕнче алă пустарчĕç.

Çĕньял-Покровски шкулĕ те палăртнисенчен уйрăлса тăмасть. «Металлорамка, турникет, кăнтăрла дежурнăй техперсонал ĕçлет, журналсене вĕсем çыраççĕ, каçхине – хуралçă. Тулта 7 видеокамера, шкул зданийĕнче 9 камера пур. Кăçал терроризма хирĕç динамиксем вырнаçтартăмăр – хăрушлăх килсе тухсан сасăпа пĕлтереççĕ. Шкул çулне çитмен ачасен ушкăнĕнче территорие хăтлăлатаççĕ. Ĕçсене вĕçленĕ хыççăн домофон вырнаçтарăпăр – ют çын кĕреймĕ», – каласа кăтартрĕ Çĕньял-Покровски шкулĕн директорĕ Валерий Митрофанов.

Лăпкă мар тапхăрта шкулсенче яваплăх темиçе хут ӳсет. Ачасен вăрçă-харçă, терактсем çинчен вĕренӳ пособийĕсем урлă кăна вуласа пĕлмелле пултăрччĕ. Çакна валли аслисен май килнине пĕтĕмпех тумалла.

■ **Елена ЛЕВИНА**